25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 СЕНТЯБРЬ 3 КĔÇНЕРНИКУН 205 (6140) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Авăн çапас ĕçе хăвăртлатар

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулти тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисене «тырă вырма тухнă хыççăн пилĕк кунран кая юлмасăр авăн çапас ĕçе тытăнма, чи малтан çĕмелсенчи тырпула çапас ĕçе организацилеме, молотилкăсене талăкра 20 сехетрен кая мар ĕçлеттерме» хушнă.

Çак постановление пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырса, малта пыракан районсемпе колхозсем авăн çапас ĕçе аван организацилерĕç. Уборкăн 2—3-мĕш кунĕнчех авăн çапма тытăнса, Вăрмар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан, «Вутлан» тата Çĕмĕрле районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тырăсене çапса пĕтерчĕç. Вăрмар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра молотилкăна талăкра 20 сехет ытла ĕçлеттереççĕ. Норма тăрăх 12 тонна тырă çапас вырăнне кашни кунах 13,5—14 тонна çапаççĕ.

Авăн çапас ĕçе кăçал эпир пĕлтĕрхинчен хăвăртрах та лайăхрах туса пыратпăр. Вăл çапла пулмалла та. Авăн çапас тĕлĕшпе Куславкка, Кувакино тата Вăрмар районĕсем республикăра малта пыраççĕ. Сентябрĕн 1-мĕш тĕлне Куславкка районĕ акнă тырăсен 45,8 процентне капана хывса, 41,5 процентне çапса пĕтернĕ. Кувакино районĕ акнă тырăсен 40,7 процентне капана хывнă, 30 процентне çапса кĕртнĕ. Çавăн пекех Вăрмар районĕ те тырăсен 35,7 процентне капана хывса, 34 процентне çапса пĕтернĕ.

Анчах кăçалхи ĕçсене, вăл шутра авăн çапассине те, пĕлтĕрхипе танлаштарма юрать-и вара? Паллах çук, хальхи вăхăт пĕлтĕрхинчен йăлтах урăхла. Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыв хăйсене мĕн кирлине кăçал пирĕнтен ытларах ыйтаççĕ, мĕншĕн тесен тăван çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха сирсе яман-ха, çав хăрушлăх вăл халĕ татах та ытларах çивĕчленчĕ. Çавăнпа тунă çитĕнӳсемпе мĕн чухлĕ те пулин лăпланса ларни преступлени туни пулать. Авăн çапас тĕлĕшпе Советски, Чкаловски, Элĕк, Вăрнар, Çĕрпӳ тата Калинински районсем юлса пыраççĕ. Калинински район руководителĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене черетпе туса пырса, ыйсăк йăнăш тăваççĕ. Çак район сентябрĕн 1-мĕш тĕлне кĕрхипе çурхи тырăсене йăлтах вырса пĕтернĕ, анчах кĕлтесене капана хывас плана 32 процент, авăн çапас плана 21,6 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ.

Пĕтĕм тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕртес тесен, кĕлтесене турттарса капана хывассине, авăн çапассине пĕр вăхăтрах пысăк хăвăртлăхпа туса пымалла. Çак ĕçсене вăраха тăсса пыни— тырпулăн пĕр пайне çухатасси патне илсе пырать.

Кĕр çитрĕ. Кĕркунне начар, час-часах улшăнса тăракан, çумăрлă çанталăк пуласси пурне те паллă. Çакна шута илсе малта пыракан колхозсем çанталăк пăсăличчен кĕлтесене турттарса капана хывас ĕçсене вĕçлеме тăрăшаççĕ. Вĕсен шутне Кувакино районĕнчи «12 лет Октября», «Путь Ильича», Вăрмар районĕнчи «Аниш», «Дружба», Ишлей районĕнчи «Агроном», «1-ое мая» колхозсене кĕртме пулать. Вĕсем кĕлтесене турттарас ĕçе çуртыррисене вырас, кĕртыррисене акас ĕçсен хăвăртлăхне чакармасăр туса пычĕç. Кувакино районĕнчи «12 лет Октября» колхоз пурĕ 618 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă. Çакăн чухлĕ кĕлтесене капана хывма ĕç вăйĕ те, туртăм вăйĕ те нумай кирлĕ пулнă. Вăл вăхăтра колхозăн лашисем пурте тенĕ пекех машинăсемпе тырă вырас, государствăна тырă турттарас тата кĕраки тăвас çĕрте ĕçленĕ. Апла пулин те çак колхозăн руководителĕсем кĕлтесене кӳрсе капана хывма ĕç вăйĕ те, туртăм вăйĕ те çитерпĕ. Вĕсем кĕлтесене алă вĕççĕн çĕклесе капана хывассине анлăн организациленĕ, лашасене ку ĕçрен хăтарнă, инçетри хирти кĕлтесене çеç лашасемпе турттарнă.

Çакăн пек тума пирĕн республикăри кашни колхозах пултарать тата вĕсем ăна тума тивĕç те. Кĕлтесене капана хывас ĕçре малта пыракансен ĕç опычĕ çапла тума хушать: туртăм вăйĕ çителĕксĕр пулнипе кăçал кĕлтесене алă вĕççĕн çĕклесе капана хывмалла, кĕлте турттарас ĕçре сĕт сахал паракан тата хĕсĕр ĕнесемпе, вăкăрсемпе усă курмалла.

Хăшпĕр районсенчи колхозсен руководителĕсем тата МТС-директорĕсем авăн çапассине кăçал та ытти ĕçсенчен кая тăратса хăварма шутлаççĕ пулас. Элĕк районнех илер. Вăл вырнă тырăсен 20,9 процентне çеç çапса пуçтарнă. Çавăн пекех Советски район та авăн çапас плана 17,8 процент çеç тултарнă. Асăннă районсен руководителĕсем кăçал та авăна хĕлле, шартлама сивĕре, çапма шутлаççĕ пулас. Кунашкал туни вăл—сиенлĕ те хăрушă. Авăн çапас ĕçе вăраха тăсма юрамасть. **Авăн çапассине вăрăма тăсни—государствăна обязательнăй йĕркепе тырă парассине, Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне тăвассине тата МТС ĕçĕшĕн натуроплата тӳлессине чăрмантарса пырать.**

Колхозсенче лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăсем чылай — вĕсене халех пурне те туллин ĕçлеттерме тытăнас пулать. Кунсăр пуçне тырра тăпачăпа та çапмалла. Кĕракинчен тата çуртыррисене вырас ĕçрен пушаннă тракторсене молотилкăпа авăн çапнă çĕре кӳлмелле. Тырă выраcсинчен пушаннă комбайнсемпе те çийĕнчех авăн çапма пуçламалла.

«МК—1100» молотилкăпа пĕлсе усă курсан, кашни сехетре 1,5 тонна таран тырă çапма пулать. Çапла вара пĕр молотилка талăкра 10 тонна тырă çапма пултарать. Кашни колхозпа машинно-тракторнăй станцирех авăн çапакансен уйрăм бригадисене тăвас пулать, вĕсене ертсе пыма колхозра ответлă работниксене лартмалла. Вăл бригада авăн çапас ĕçе мĕнпур майсемпе (лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăсемпе, трактор молотилкисемпе, тырă вырас ĕçрен пушаннă комбайнсемпе) организацилеме тивĕç.

Колхоз председателĕсен, МТС директорĕсемпе политотдел начальникĕсен тата çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсен паянхи задачи вăл —**авăн çапас ĕçе хăвăртлатасси.**

Колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисен руководителĕсен итем çинчи ĕçе тĕрĕс организацилемелле. Молотилкăпа ĕçлекен кадрсенчен, уйрăмах машинистсенчен, кăçал чылайĕшĕ фронта кайнă, ку ĕçе çĕнĕ кадрсем чылай хутшăннă. Çамрăк кадрсене куллен пулăшса тăмалла, молотилкăн кашни агрегатне йĕркеллĕ, пĕр тикĕс ĕçлекен тумалла. Авăн çапас ĕçе хăвăртлатма рационализаторла ĕçсем тăвакансене куллен пулăшса, хавхалантарса пымалла. Молотилкăна шыв тата çил вăйĕпе ĕçлеттерме майлаштармалла. Йĕпреç районĕнчи «Эконом» колхоз членĕсем Т. Ниçитинпа М. Ильин юлташсем нумай пулмасть шыв вăйĕпе авăн çапакан молотилка тунă. Колхоз тырпулсен пысăк пайне шыв арманĕн вăйĕпе çапать. Авăн çапас ĕçе хăвăртлатма пулăшакан майсене кашни колхозникăн, колхозсемпе МТС руководителĕсен шыраса тупас пулать.

Колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисен руководителĕсем, молотилка машинисчĕсем, авăн çапас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăсенчи колхозниксем, молотилăсене талăкра 20 сехетрен кая мар, пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерĕр, авăн çапас ĕçсен хăвăртлăхне хальхинчен темиçе хут ӳстерĕр!

Воскресник кунĕнче государствăна 27.808 центнер тырă панă

ВЛКСМ Чăваш организацийĕ августăн 30-мĕшĕнче ирттернĕ воскреснике комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем, çавăн пекех ытти колхозниксемпе колхозницăсем те йышлăн хутшăнчĕç. Çав кун колхозсем государство складĕсене 27.808 центнер тырă хывнă.

Воскреснике уйрăмах Елчĕк районĕнче [illegible] хатĕрленсе ирттернĕ. Унта 537 лавпа кайса, государствăна 1.839 центнер тырă панă. Сĕнтĕр районĕнчи колхозсенчен тырă леçме 555 лав кайнă, хатĕрлев пункчĕсене 1.736 центнер хывнă. Канаш районĕнчи колхозсем 454 лавпа 1.596 центнер леçнĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕ 1.550 центнер панă. Калинински районри колхозсенчен 1.502 центнер, Шупашкар районĕнчен—1.489 центнер, Первомайски районран—1.479 центнер тырă хатĕрлев пункчĕсене леçсе панă.

Республикăри нумай районсенче воскресник аван иртнĕ.

Çав вăхăтрах комсомолăн уйрăм районсенчи организацийĕсем воскресник ирттерессе çине çителĕксĕр саварăнса пăхнă. ВЛКСМ Йĕпреç райкомĕ (секретарĕ Никишова юлташ), воскресник туса государствăна тырă ăсатас ĕçе организацилеме тăрăшман. Çавна пула ку районри колхозсем августăн 30-мĕшĕнче хатĕрлев пунктне пĕтĕмпе те 30 центнер кăна тырă хывнă. Комсомолăн Çĕмĕрле райкомĕ те (секретарĕ Буравин юлташ) воскреснике начар ирттернĕ, унта 202 цент. кăна тырă панă. Кувакино районĕнчен (райкомол секретарĕ Ушкова юлташ) çак кун хатĕрлев пунктне тырă 227 центнер кăна леçсе панă. Çавăн пекех Вăрнар, Элĕк, Çĕрпӳ, Шăмăршă районĕсенче те комсомолецсемпе çамрăксене тата ытти колхозниксемпе колхозницăсене воскреснике сахал хутшăнтарнă.

Пĕтĕмĕшпе илсен воскресник республикăра аван иртнĕ.

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра уборкăна вĕçлер! Авăна кунĕн-çĕрĕн çапар, государствăна тырпул парса татар!

Чăваш АССР Наркомземĕн Политикăллă секторĕ тăратнă тăрăх, машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн тата тракторпа ĕçлемелли çулталăк планне срокчен пурнăçланăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

16. **Шăхасанти машинно-тракторнăй станци** (директорĕ **Н. К. Константинов** юлташ, политотдел начальникĕ **Ф. М. Ижутов** юлташ, старши механикĕ **Северов** юлташ, старши агрономĕ **Большешальский** юлташ). МТС августăн 25-мĕш тĕлне тракторсемпе ĕçлемелли çулталăк планне, авăн çапнисĕр пуçне, 100,8 процент тултарнă.

Тăвай МТС-ĕ тăрăх

17. **4-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **Илья Петров**). Бригада, çемçе сухапа шутласан, тракторпа ĕçлемелли çулталăк планне, авăн çапнисĕр пуçне, 131,2 процент тултарнă, 3.158 килограмм горючи перекетленĕ.

18. **12-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **Иван Егоров**). Бригада тракторпа ĕçлемелли çулталăк планне, авăн çапнисĕр пуçне, 125 процент тултарнă тата 2.563 килограмм горючи перекетленĕ.

19. **1-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **Павел Коровин**). Бригада тракторпа ĕçлемелли çулталăк планне, авăн çапнисĕр пуçне, 108,2 процент тултарнă тата 3.692 килограмм горючи перекетленĕ.

20. **Тракторист Тимофей Сорокин.** ЧТЗ тракторпа ĕçлесе вăл çулталăк планне 169 процент тултарнă, 1.402 килограмм горючи перекетленĕ.

21. **Тракторист Александр Баданов.** ЧТЗ тракторпа ĕçлесе вăл çулталăк планне 163,4 процент тултарнă, 1.271 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

22. **Трактористка Нина Кузьмина.** СТЗ тракторпа ĕçлесе вăл плана 135,5 процент тултарнă, 1.382 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

23. **Трактористка Анастасия Васильева.** У—2 тракторпа ĕçлесе вăл плана 125 процент тултарнă, 469 килограмм горючи перекетленĕ.

24. **Тракторист Павел Петров.** У—2 тракторпа ĕçлесе вăл çулталăк планне 112,2 процент тултарнă, 394 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

25. **Тракторист Василий Захаров.** ЧТЗ тракторпа ĕçлесе вăл плана 106 процент тултарнă, 294 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

26. **Тракторист Дмитрий Арапов.** ЧТЗ тракторпа ĕçлесе вăл плана 105,5 процент тултарнă, 126 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

27. **Тракторист Иван Егоров.** СТЗ тракторпа ĕçлесе плана 100,9 процент тултарнă, 90 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

28. **Трактористка Анна Михайлова.** СТЗ тракторпа ĕçлесе вăл плана 112 процент тултарнă.

29. **Трактористка Анна Иванова.** СТЗ тракторпа ĕçлесе вăл çулталăк планне 100,2 процент тултарнă.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе вĕçлемелли фронтовой вунăкунлăх

Саратов облаçĕ пуçарнă тăрăх, сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшне çити вăхăтра тырпулсене пухса кĕртес ĕçе вĕçлес тĕлĕшпе фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх пулса иртет.

Çак вунăкунлăха тивĕçлипе ирттерсе уборка ĕçĕсене хăвăрт вĕçлес тесе, ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен вăйлă кĕрешӳ пуçарса ярас пулать. Колхозниксем, МТС-семпе совхозсен рабочийĕсем тата служащийĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатса, ялти халăха пĕр çын юлмиччен хирти ĕçе явăçтармалла. Колхозсемпе МТС-сен машинисемпе тата комбайнсемпе туллин усă курмалла. Кашни колхозник хăйĕн заданине ирттерсе тултармалла тăвас пулать, юлса пыракан колхозсем çине уйрăмах çавăрăнса пăхни кирлĕ. Çапла майпа вара авăн çапас, кĕлтесене капана хывас, кĕракине ирттерес, государствăна тырпул парас тата МТС ĕçĕшĕн натуроплата тӳлес тĕлĕшпе районсем, колхозсем кая юлса пынине пĕтерме тăрăшмалла.

ВКП(б) Обкомĕ хушнă тăрăх, вунăкунлăха ирттерме колхозсене партипе совет активне командировкăна ямалла.

Хĕвеланăç тата Калинин фрончĕсенчи çĕнтерӳсемпе хавхаланса

ЙĔПРЕÇ, сентябрĕн 1-мĕш. (**Телефонпа**). Паянхи куна районри 7 колхоз кĕрхипе çурхи пучахлă тырăсене вырса пĕтерчĕç. 6 колхоз кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç. Кировски ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем, Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕпе хавхаланса ĕçлесе, кĕрхи тырăсене ĕнер акса пĕтерчĕç. Халĕ планран ирттерсе 15 гектар тырă акаççĕ.

Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Кулаков) уйрăмах лайăх ĕçлет. Çав колхоз кĕрхи тырăсене ытти колхозсенчен малтан акса пĕтерчĕ. Планран ирттерсе 5 гектар акрĕ.

Колхозниксем кĕракине хăвăртрах вĕçлес тесе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Ферма заведующийĕ Ефим Иванов плугпа ĕçлесе нормăна кашни кун 135 процент тултарса пычĕ. Мария Тимукова, унăн виçĕ уйăхри çамрăк ачи пур пулсан та, кĕраки ĕçĕсене хутшăннă; плугпа ĕçлесе, нормăна 130 процент тултарса пынă.

Ку колхозра уборка ĕçĕсем те ăнăçлăн пулса пыра[illegible] Колхоз ыран çуртыррисене вырса пĕтерет. Кĕрхи тырăсен кĕлтисене пĕтĕмпех капана хывнă. Çĕнĕ тырра çапса график тăрăх государствăна параççĕ, кашни пилĕккунлăхра графика тултарса пыраççĕ. Ялсовет председателĕ Анна Уткина уборка ĕçĕсене конкретно ертсе пырать.

Ку колхозăн йĕтĕн питĕ чаплă çитĕннĕ. Çав йĕтĕне колхозниксем питĕ тăрăшса татаççĕ. Дария Ягидкина, Агния Васильева, Елена Герасимова, София Иванова кунне 0,05 гектар йĕтĕн татас вырăнне 0,08 гектар татаççĕ. Паян йĕтĕн татса пĕтереççĕ. 1,5 гектар çинчи йĕтĕне çапса çерем çине сарнă.

«Красный Октябрь» колхоз та государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарать. Пĕрчĕллĕ тырăсемпе пăрça йышши культурăсене 1942 çулшăн парса татнă. Сĕт памалли обязательствăна 119 процент, çăмарта—101,3, хăяр, сухан, кишĕр—108 процент тултарнă. Аш-какай, çăм т. ыт. те парса татнă.

Д. МИХАЙЛОВ.

Государствăна тырă памалли задание кашни колхозăн вăхăтра тултармалла

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 26-мĕш. (**Телефонпа**). Район юлашки вăхăтра государствăна тырă парас ĕçе чылай вăйлатрĕ. Хатĕрлев пункчĕсене кашни пилĕккунлăхрах 85-шер тонна тырă леçсе тăмалла пулсан, районри колхозсем августăн 15-мĕшпе 20-мĕш хушшинчи пилĕккунлăхра 89 тонна, августăн 20-мĕшпе 25-мĕш хушшинче 104 тонна леçрĕç.

Ленин ячĕпе тăракан, «Новая жизнь», «Авангард», «Молодая сила» колхозсем пилĕккунлăхри заданисене ирттерсе тултарчĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз юлашки икĕ пилĕккунлăхра государствăна 192 центнер тырă парас вырăнне 215 центнер пачĕ.

Малта пыракан колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне тума та тырă параççĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз çак ĕç валли 27 центнер, «Новая жизнь» колхоз 99 центнер хыврĕç.

Анчах «Путь Ленина», «Красный пахарь», «Красный Октябрь» колхозсем ку таранччен те государствăна тырă пама тытăнман-ха. Çак колхозсенче тырă турттарса тăракан транспорт бригадисем организацилемен.

Государствăна тырă парса тăмалли пилĕккунлăхри заданисене кашни колхозăн вăхăтра пурнăçласа пымалла.

Натуроплата тыррине пама васкамаççĕ

ТĂВАЙ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулхи тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире «Колхозсемпе совхозсем государствăна паракан [illegible] тырăн, çу кăлармалли культурăсен тата çĕрулмин малтанхи ушкăнĕ колхозсемпе совхозсем государствăран илнĕ ссудăсене витнĕ çĕре, çавăн пекех тата колхозсен обязательнăй йĕркепе памалли, МТС ĕçленĕшĕн памалли иртнĕ çулти парăмсене татнă çĕре каймалла», тесе кăтартса панă. Анчах ку тарăна çитсе те Тăвай МТС-ĕ ĕçлесе тăракан колхозсен руководителĕсем çак постановление ăнланса илмен-ха. Çавна пула вĕсем кăçал та иртнĕ çулхи йăнăшпа тăваççĕ, натуроплата тыррине парассине кайри вырăна тăратса хăвараççĕ.

МТС вăйĕпе иртнĕ çул тунă ĕçсемшĕн районри колхозсем 1.246 центнер тырă парса татман. Государствăна тырă панипе пĕр вăхăтрах натуроплата тыррине парса татмалла. Анчах Лачкассинчи «Звезда» колхоз (колхоз председателĕ Хаймуллин юлташ) МТС иртнĕ çул ĕçленĕшĕн памалли 283 центнер тырра ку таранччен те паман, Вăрманхĕррипчи «Красное Сормово» колхоз та (колхоз председателĕ Мукин) 247,6 центнер парăма памасăр пурăнать, кăçал ĕçленĕшĕн те пĕр центнер та паман. Çавăн пекех иртнĕ çулти натуроплата тыррине «Свободный труд» колхоз 132,63 центнер, «25 Октября» колхоз 191 центнер, «Сталь» колхоз 90,37 центнер, «Коммунар» колхоз 74 центнер парса татман.

Кăçал ĕçленĕшĕн памалли натуроплата тыррине «Культура» колхоз 63,26 центнер, «1 мая» колхоз 11,83 центнер, «25 Октября» колхоз 14,06 центнер çеç панă. Ытти колхозсем кăçалхи ĕçсемшĕн натуроплата тыррине пама пачах тытăнман.

Государствăна тырă панипе пĕр вăхăтрах колхозсен МТС тунă ĕçсемшĕн натуроплата тыррине те парса татмалла.

В. ЧЕРНОВ.

Государствăна çĕрулми, пахча-çимĕçсем параççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Чылай колхозсем государствăна пахча-çимĕç пама тытăнчĕç. Хутаркпи Ленин ячĕпе тăракан колхоз хăяр памалли обязательствăна тултарнă хыççăн, 12,92 центнер кишĕр, 15 центнер кăшман тата 29 центнер сухан пачĕ.

Улхашри «Красноармеец» колхоз та кăçал государствăна 5.238 килограмм хăяр, 600 килограмм сухан пачĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз хăяр парас плана 200 процент ытла тултарчĕ.

Районĕпе пурĕ государствăна 35 тонна ытла хăяр, 70 центнер ытларах купăста тата темиçе вуншар центнер кăшман, кишĕр, çĕрулми панă.

Х. ЛИСИН.

* * *

ЕТĔРНЕ. (**Телефонпа**). Районри хăшпĕр колхозсем государствăна çĕрулми пама тытăнчĕç. Стрелецкинчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Недописцев) государствăна 730 центнер çĕрулми парса хăйĕн обязательствине тултарчĕ. Кунсăр пуçне, колхоз колхозниксемшĕн 72 центнер панă. Çавăн пекех Çĕнĕ Ядриноври «Комсомол» колхоз — 71 центнер, Мăн Шемертенри «Ленинские заветы» колхоз 22 центнер çĕрулми пачĕç.

А. КРАСНОВ.

ИШЛЕЙ. (**Телефонпа**). Ишекри Сталин ячĕпе тăракан колхоз çак кунсенче 1942 çулти обязательствăсен шучĕпе государствăна 4 тонна çĕрулми пачĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

Укерчĕк çинче: Тăвай МТС-ĕнчи тракторист Егоров юлташ. Вăл августăн 15-мĕш тĕлне трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 100,9 процент тултарнă, 90 килограмм горючи перекетленĕ.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

Плана уйăхсерен ирттерсе тултарать

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ Н-ски завод августри производство программине ирттерсе тултарчĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малти вырăнтах пулассишĕн кĕрешсе, завод коллективĕ çĕнĕ çитĕнӳ турĕ. Коллектив тăван çĕршывăн ырĕкĕлĕхĕпе чыслăхĕшĕн, юратнă Хĕрлĕ Çара пулăшассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлет.

Иртнĕ уйăхра завод хăйĕн производствине чылай анлăлатса çĕнетрĕ, ку таранччен продукцин кăларăмне ӳстернисĕр пуçне çĕнĕ изделисем туса кăларма пуçларĕ. Завод августра икĕ наркомата тăратмалли изделисене ытлашшипех туса кăларнă, тепĕр наркомат тăрăх, кварталти плана тултарнă. Икĕ тĕрлĕ изделие енĕпе вара çулталăкри задание те вĕçленĕ. Туса кăларнă продукцие лайăх хак парса йышăннă. Малашне коллектив плана пур наркоматсем енĕпе те тата заданисене пур изделисем тăрăх та ирттерсе тултарассишĕн кĕрешет.

Тĕп цехсенчен, иртнĕ уйăхри пекех, А. Кинзбургский юлташăн цехĕ, заводăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕскер, лайăхрах ĕçленĕ. Уйăхри производство планне вăл ытлашшипех тултарнă, çĕнĕ йышши изделисене ăнăçлăн туса кăларма пуçланă тата лайăх пахалăхлă продукци панă.

Семеновпа Калитвянский юлташсен цехĕсем августри задание ытти цехсенчен малтанрах — уйăхăн 29-мĕш кунĕнче вĕçленĕ. Юлашки кунсенче продукцие заданирен ирттерсе туса кăларнă. Ку цехсенчи рабочисенчен Смирнова, Долгушина, Никитина, Ильина тата Маковская стахановкăсем уйрăмах пысăк тухăçлăхпа ĕçленĕ.

Ăмăртури çитĕнӳ

КУСЛАВККА, сентябрĕн 2-мĕш. (**Телефонпа**). Социализмлă ăмăртупа стахановла движение анлăн сарса пырса тата производствăна урăхлатса çĕнетсе комбинат коллективĕ августра пысăк çитĕнӳ турĕ — уйăхри ĕçсен программине чылай ирттерсе тултарчĕ.

Иртнĕ уйăхра комбинатăн пур цехĕсем те пысăк хăвăртлăхпа тата çĕкленсе ĕçлерĕç, заданисене срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç. Симонов юлташ ертсе пыракан цех уйăхри задание 15 кун хушшинче, Пушкин юлташăн цехĕ 20 кун хушшинче, Дружинин юлташăн цехĕ 26 кун хушшинче вĕçлерĕç.

Калашников юлташ ертсе пыракан цех пуринчен те тухăçлăрах ĕçлерĕ. Цех уйăхри производство планне 162 процент тултарчĕ, лайăх пахалăхлă продукци пачĕ. Çавăншăн вăл комбинатăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Цехри чи лайăх стахановецсем Майоров, Езаров, Желанкин юлташсем нормăна куллен 250—300 процент тултарса пычĕç. Старши мастер Шутов, мастер Злочевский юлташсем производствăна пултаруллă ертсе пычĕç.

Симонов юлташăн цехĕнчи Колесников стахановец августри нормăна 452 процент, Козырев — 230 процент тултарнă. Дружинин юлташăн цехĕнчи Микельсонс рабочи нормăран виçĕ хут тухăçлăрах ĕçленĕ.

Н. ПЕТРУЧЕНКО,
Комбинатри партбюро секретарĕ.

Августри плана 180 процент тултарнă

ÇĔМĔРЛЕ, сентябрĕн 1-мĕш. (**Телефонпа**). Торф предприятийĕ 6.600 тонна торф кăларса, çулталăкри плана 110 процент тултарчĕ. Коллектив уйрăмах августра тухăçлă ĕçлерĕ: уйăхри плана 180 процент тултарчĕ.

Социализмлă ăмăртура рабочисен ĕç тухăçлăхĕ ӳссех пырать. Лаптенкова, Ордикова, Трифонова, Тихонова, Милина тата Толстова стахановкăсем 2—3-шер норма тултараççĕ. Çамрăк стахановец Ивлачева юлташ çак кунсенче сменăри нормăна 335 процент тултарса çĕнĕ çитĕнӳ турĕ.

Поездсене хăвăрт ăсатаççĕ

УЛАТĂР. Хусан чугунçулĕн Кире станцинчи дежурнăйсем Филиппова, Танькин тата Слепова юлташсем хăйсен ĕçĕсене тĕрĕс туса пырассишĕн пĕр-пĕрипе социализмлă ăмăртăва тухнă. Çакăн хыççăн вĕсем поездсене расписанирен хăвăртрах йышăнса ăсатма пуçланă. Слепова юлташ ку таранччен поездсене расписанирен 41 сехет иртерех ăсатнă. Филипповăпа Танькин дежурнăйсем те поездсен станцире тăрас вăхăтне 30-шар сехет перекетленĕ. Унпа пĕрлех вĕсем стрелка хуçалăхне юсавлă тытса тăраççĕ.

И. МИТЯСЬ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳрен

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хаяррăн çапăçнă. Ытти фронтсенче пăлтă улшăнусемех пулман.

* * *

Августăн 31-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 15 танкне çити, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 70 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 3 складне тата горючи усракан 4 склада сирпĕнтерсе янă, хуралра çӳрекен 6 катера путарнă, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç вăйлă çапăçусем пынă. Н-ски чаçри боецсем, танксем пулăшса пынипе, темиçе сехет хушши пынă çапăçура нимĕçсен 11 танкне, 7 противотанковăй орудине, 2 йывăр орудине, 19 станковăй пулеметне тата 450 гитлеровецa çити пĕтерсе тăкнă.

Клетская районĕнче нимĕçсемпе итальянецсен пехотин темиçе атакине сирсе янă, противник пысăк çухатусем тусă. [illegible] рубежĕсене [illegible] офицерĕсене 150 [illegible] ытла пĕтерсе [illegible].

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн [illegible]. Пĕр участокра танксен пысăк вăйне пухса тăратса, нимĕçсем наступлени пуçласа янă та пирĕн оборонăна савăлланса кĕнĕ. Пирĕн чаçсем противникăн татса кĕнĕ группировкине хирĕç хаяррăн çапăçаççĕ. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем, командованин планĕ тăрăх, çĕнĕ оборонăлла рубежсем патне чакнă.

* * *

Краснодартан кăнтăрарахра нимĕçсем, пысăк çухатусем тӳссе, темиçе высотана тата халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илме пултарнă. Пирĕн боецсен çăмăллăн кусса çӳрекен групписсем противника хирĕç контратака тунă та хăйсен позицийĕсене каялла туртса илнĕ. Çав çапăçура 6 танк, 15 автомашина тата противникăн пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет войскисем противникăн йышлăрах вăйĕсем хĕснипе çĕнĕ позицисем патне чакнă.

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем шыв урлă хыçнă каçăсемпĕн пынă çапăçура 12 понтон çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче противникăн пĕр полк пехоти, 40 танк пулăшса пынипе, Н-ски часть хӳтĕлекен рубежа атакăлама хăтланнă. Артиллерипе пулеметсенчен персе, пирĕн боецсем нимĕçсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне çити вилсе юлнă. Нимĕçсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă, 6 танкне çĕмĕрнĕ.

Ленинград фронтĕнче разведка тăвакан группăсем активлăн кĕрешнĕ та-та [illegible] пĕтерсе тăкнă. [illegible] 12 пулемет, 2 оруди, пăшал патронĕсем 10.000 яхăн тата минăсемпе снарядсем нумай тытса илнĕ.

Подлесный тата Хотунцкий лейтенантсем, кĕçĕн лейтенант Петров тата Малышевпа Хвостик красноармеецсем хăюллă операци туса ирттернĕ. Çĕрле вĕсем противник вырнаçнă вырăна кĕрсе кайнă та противникăн землянкисене гранатăсем нумай пăрахнă. Противник хăраса ӳксе арпашса кайнипе усă курса, пирĕн боецсем противотанковăй орудие тытса илнĕ те ăна хăйсен чаçĕ тăракан вырăна кустарса çитернĕ.

* * *

Г. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ белофиннсен тылĕнче темиçе хăюллă операци туса ирттернĕ. Партизансем вăрмансемпе тата шурлăхсемпе пырса 700 километра яхăн кайнă, вĕсем противникăн çыхăнăвĕсене кĕтмен çĕртен тапăна-тапăна пынă. Партизансен отрячĕ хирĕç чиперри чаçсене тата шюцкоровецсен отрячĕсене янă. Белофиннсене хирĕç пынă çапăçусенче партизансем 750 салтакпа офицера çити вĕлерсе пĕтернĕ, автоматсăр пĕçăллал, радиостанцисем, çар хатĕрĕсем тата боеприпассем нумай пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин облаçĕнчи халĕ нимĕçсенчен ирĕке кăларнă Пудово ялĕнчи çынсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тискер ĕçсем тунă тата çаратни çинчен акт çырнă. Çав актра çапла каланă: «Пирĕн ялта нимĕç вăрă-хурахĕсем 11 уйăх хушши хуçаланса пурăнчĕç. Салтаксемпе офицерсем колхозниксен çурчĕсене çĕмĕрсе кĕретчĕç [illegible] колхозникĕнне малтан виçĕ ачипе арăмне вĕлерчĕç, унтан вара хăйне те вĕлерчĕç. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çывхарнине каялла чакнă чухне гитлеровецсем пурăнмалли 56 çурта тата колхозниксен мĕнпур хуçалăх çуртĕсене çунтарса ячĕç». Çав акта ялти çак çынсем алă пуснă: Анна Вишнякова, Пелагея Чудинова, Татьяна Батурина тата ыттисем те.

Сентябрĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Сентябрĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хаяррăн çапăçнă. Ытти фронтсенче палăрă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн атакисене сирсе-сирсе янă. Нимĕçсем, Н-ски часть хӳтĕлекен рубежа хирĕç наступлени пуçласа, пирĕн оборонăна шăтарса кĕнĕ. Флангран пырса çапса, пирĕн чаçсем противника хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне чакарнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 240 вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра нимĕçсен колонни çине пирĕн засадăра тăнă танксен подразделенийĕ тапăннă. Противникăн 4 танкне персе çĕмĕрнĕ, 11 автомашинине, 5 противотанковăй орудине тата 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

Клетская районĕнче пирĕн разведка отрячĕ итальянецсен пехотин пĕр ротине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн пирĕн оборонăна татса кĕнĕ танкĕсене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Н-ски чаçри боецсем хаяр çапăçура 12 танк тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем оборонăлла çĕнĕ рубежа çинче çирĕпленсе тăрса, противникăн атакисене сирсе-сирсе янă.

* * *

Краснодартан кăнтăртаратра пирĕн чаçсем противникăн темиçе атакине сирсе янă. Çапăçура нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла пĕтерсе тăкнă, 4 миномет, 8 пулемет, винтовкăсем, патронсем тата минăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем вăйлăн çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан пĕр пунктран пухса кайнă.

Прохладный районĕнче совет чаçĕсем оборонăлла çапăçусем туса пырса, нимĕç пехотин атакисене сирсе-сирсе янă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем, активлăн çапăçса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Противника пирĕн артиллери пысăк çухатусем тӳстерет. Кĕçĕн лейтенант Попрана ертсе пыракан батарейăн артиллеристĕсем тăшманăн пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă, минометсен 3 батарейине пусарса лартнă тата противникăн боеприпассем кунă складне сирпĕнтерсе янă. Красноармеец-артиллеристсем Трофимов, Ноздрачкин тата Глухов юлташсем нимĕçсен противотанковăй орудине тытса илнĕ. Çав орудие нимĕçсем енне çавăрса лартса, вĕсем унтан пеме тытăннă та нимĕçсен 2 танкне çĕмĕрнĕ.

Опытлă учительсем çамрăккисене пулăшаççĕ

СЕНТЕР. (Телефонпа). Пĕрремĕшне тăваттăмĕш классенче вĕренме тытăнакан ачасене августăн 25-мĕшĕ тĕлне пурне те [illegible]. Районĕпе пурĕ 3.252 ача [illegible].

[illegible]

Ачасем хушшинче кивĕ учебниксене 8.000 кĕнеке ытла [illegible].

Шкулсем валли пирĕн 5.400 кубометр вутă хатĕрлемелле пулнă, вĕсенчен эпир 3.900 кубометр хатĕрленĕ, 2.250 кубометр шкулсен картишне турттарса тухнă.

[illegible]

М. КОЗАКОВ,
Районри сут-ĕçпайĕн заведующийĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

ЧКАЛОВСКОЕ. (Телефонпа). Июльпе август уйăхĕнче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлеме пĕтĕмпе 217 килограмм çăм, 555 тир пухнă, вĕсенчен 37 мăшăр çĕмата йăвалаттарнă тата 14 кĕрĕк пиншак, 18 жилетка, 38 мăшăр алса çĕлеттернĕ. Кусемсĕр пуçне, районĕпе 64 мăшăр носки, 75 мăшăр алшăш, 8 фуфайка, 68 мулаххай, 107 алшăлли, 14 простыня, 6 одеял, 143 метр пир тата ытти япаласем те пухăннă.

Ăçта ăшă тумтирсем пухакан комиссисем лайăх ĕçлеççĕ, унта çак ĕç ăнăçлăн пулса пырать. «Красное знамя» колхозра 65 тир, 4 мăшăр çĕматă, 32 мăшăр портянка, 12 мăшăр носки пухнă. «Звезда» колхозра 62 тир, 15 килограмм çăм, 12 мăшăр носки, 10 мулаххай пухăннă. Алманча ялсоветĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 24 килограмм çăм, 2 мăшăр çĕматă, 42 тир, 10 мăшăр носки, 17 метр пир тата ытти япаласем те панă.

Çав вăхăтрах уйрăм ялсоветĕсенчи комиссисем питĕ начар ĕçлеççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 8 килограмм çăм, Тăрăн ялсоветĕнчи «Красное Батырево» колхозра носкисем пухса панипех лăпланса ларнă.

М. ФЕДОТОВ.

Ют çĕршывсенче

„Çине тăрса кĕрешни иккĕмĕш фронт тăвас çул çинчи йывăрлăхсене çĕнтерме пултарать"

Канадăра тухакан хаçатăн статьи

ОТТАВА, сентябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). «Бюллетень» хаçат (Эдмонтон) Рид [illegible]

[illegible]

Гитлеровецсем французсен культурине пĕтереççĕ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). [illegible]

[illegible] историллĕ мĕнпур памятниксене пĕтерме тытăнчĕç. Нимĕç офицерĕсем паллă Луврски музее çаратрĕç, вĕсем живопиçпе скульптурăн чи хаклă произведенийĕсене, авалхи алçырăвĕсене тата историллĕ ытти экспонатсене салатса пĕтерчĕç.

Нимĕçсем Парижри историллĕ суртсемпе памятниксене, çав шутра Сен Жермен—де Про, Сен Жерве чиркĕвĕсене, Король дворецне тата ыттисене те çĕмĕреççĕ. Хулана «реконструкцилес» сăлтавпа Парижра истори енчен питех те хаклă памятниксем, Франци революцийĕпе Париж коммуни вăхăтĕнчи событисен памятникĕсем пулса тăракан пĕтĕм кварталсене сӳтеççĕ.

Гитлеровецсем Француз интеллигенцине—ученăйсене, писательсене, художниксене, артистсене тискер кайăк çиллипе çиленсе пĕтерсе пыраççĕ. Гитлеровецсем французсен питĕ паллă 7 ученăйне, çав шутра Левицкийпе Вильде профессорсене персе вĕлернĕ.

Французсем нумаях пулмасть,—тесе çырать автор,—гестаповецсем Пастерăн ывăлĕн ывăлне—Пастер-Валлери Радо профессора тытас тесе вăйăхласа çӳренине курчĕç. Пастер-Валлери Радона вăл оккупантсене курайман пирки гестапо çиленнĕ. Пастер-Валлери Радо вăл французсен чи паллă врачĕсенчен пĕри тата Парижри медицина факультечĕн деканĕ пулса тăрать. Темĕн пек тăрăшса шырасан та, гестаповецсем халиччен унăн йĕрне тупайман.

Америка хаçачĕсем Испанине тытакан сыхăнусене татма чĕнеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). [illegible]

[illegible] сем Испани халăхне вăрçа туртса кĕртме шутланине, Франкон декларацине пурнăçа кĕртсе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем çине пеме тытăнма шутланине пирĕн витĕрех курса тăмалла»,—тесе çырать.

«Морнинг ньюс» хаçат (Техас штатĕнчи Дăлласра тухаканскер) Испанине тытакан çыхăнусене халех татма чĕнет тата Франкон хальхи вăхăтри политики шĕрлешнĕ çĕршывсене сиен кăна кӳрет тесе пĕлтерет. «Франко,— тесе çырать çав хаçат,— Гитлерăн пукани кăна пулса тăрать. Испанин тĕрлĕ çĕршывсенче туса пыракан пропагандăпа шпионажа Берлинран ертсе пыраççĕ. Юлашки вăхăтра Латинла Америкăра Германипе Японин нумай агенчĕсене арестленĕ. Анчах çав вăхăтрах Испанин агенчĕсем те нимĕçсемпе японецсенчен сахал мар хăрушлăх кӳреççĕ, çапах та вĕсене тытмаççĕ».

Индири лару-тăру

ЛОНДОН, сентябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, индуссен пысăк влияниллĕ Хинду Махасабах организацийĕн исполкомĕн бюровĕ темиçе кун хушши пынă канашлу хыççăн резолюци йышăннă; çав резолюцире вăл Индие халăх никама пăхăнманлăх прави пама, Англи правительствипе Индири политикăллă тĕп партисем хушшинче Индири халăхи йывăрлăхран тухма çул тупмашкăн халех калаçу пуçласа яма тата Индин нацилле правительствине туса хума ыйтать.

Резолюци правительствăн репрессисем тăвас политикине сивлет тата конгресăн тытса хупнă лидерĕсене ирĕке кăларма ыйтать.

Хинду Махасабах исполкомĕн бюровĕ çичĕ çынтан комитет тунă, вăл комитетăн задачи—халăха çав требованисемшĕн тăма ӳкĕтлесси, çавăн пекех тата тĕрлĕ партисен лидерĕсемпе тата Инди правительствин представителĕсемпе калаçасси пулса тăрать.

Японин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Того отставкăна тухни

ТОКИО, сентябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Того Сигенори паян отставкăна тухнă. Япони императорĕ унăн отставкине йышăннă, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн обязанноçĕсене туса пырассине премьер-министр Тодзио çине хунă.

Премьер-министр Тодзио çакăнпа пĕр вăхăтрах çар министрĕ те пулса тăрать.

—o—

СУД

Колхоз тыррине вăрланăшăн

Октябрьски районри Услăх ялĕнче пурăнакан Е. Красновăпа Кирхинская çуракн вăхăтĕнче яровизацилене çĕрте ĕçленĕ. Вĕсем, çак майпа усă курса, колхоз тыррине вăрлама пикеннĕ. Вăрланă тырра çĕрле Е. Красновăн тăванĕ Г. Краснов патне, лаçра пытарнă. Çакна колхоз охранникĕ С. Крупнов юлташ сиснĕ те тивĕçлĕ органсене пĕлтернĕ.

Октябрьски районри халăх сучĕ çак ĕçе пăхса тухса, колхоз тыррине вăрланă Е. Красновăпа А. Кирхинскаяна 5-шер çул хушши тĕрмере лартмалла, колхоз тыррине вăрлама пулăшнă Г. Краснова — 3 çул хушши тĕрмере лартмалла турĕ. **Н. АЛЕКСАНДРОВА**

Агитаторсем тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире çакна кăтартса пачĕç: «тырпулсене вăхăтра, ăнăçлăн пухса кĕртесси, государствăн ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли планне тултарасси—совет, парти тата комсомол организацийĕсен, колхозсен, МТС-сен, совхозсен тата тырпулсене пухса кĕртес ĕçри кашни çынăн вăрçă хуçалăх тĕлĕшĕнчи чи пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать, çак задачăна пурнăçа кĕртни нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма пулăшать».

М. И. Калинин юлташ çапла калать: «тырпулсене лайăх пухса кĕртни, апатçимĕçсене перекетлĕн тыткалани—çакă вăл фашистла бандăна хирĕç вăрçнă çĕрте чылай пысăк çапăçура çĕнтерни пулать. Уборка — вăл фронтри çапăçупа пĕрех».

Правительствăпа парти уборка çинчен йышăннă постановление ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе агитаторсем пысăк ĕç тăваççĕ. Коммунистсемпе комсомолецсем, партире тăман большевиксем хăйсен çивĕч сăмахĕпе тата ĕçре пример кăтартса, колхозниксемпе колхозницăсене уборкăра тăрăшса ĕçлеме хавхалантарса пыраççĕ.

Пирĕн республикăри колхозсенче халĕ 7.816 агитатор ĕçлет. Агитаци ĕçне ялти коммунистсем, комсомолецсем, малта пыракан колхозниксем тата интеллигентсем туса пыраççĕ. Хуласенчи тата район центрĕсенчи активран уборкăна 1.406 агитатор кайнă. Çапла вара, уборка вăхăтĕнче массăсем хушшинче политикăллă ĕçе туса пыракансен йышĕ пысăк.

Уборкăра агитацилле ĕçе вырлĕ пек организацилес тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕсем сахал мар тăрăшрĕç. Партин Вăрмар райкомĕ (секретарĕ Крючков юлташ) уборкăна тухас умĕн агитаторсен йышне пăхса тухнă, çĕнĕрен 73 агитатор уйăрнă, агитколлективсен руководителĕсем пулма çĕнĕрен 5 çын уйăрнă. Пĕтĕмпе хальхи вăхăтра колхозсенче 420 агитатор ĕçлет. Кашни агитколлективрах уборка вăхăтĕнче политикăллă ĕçе организацилес ыйтупа семинарсем ирттернĕ, унта «Памятки сельского агитатора на уборке урожая» ятлă кĕнекене вĕреннĕ. Çавăн пекех политçут ĕçĕнчи работниксен семинарне те ирттернĕ. Тырă вырма тухас умĕн партин пуçламăш организацийĕсем политикăллă-массăллă ĕçе организацилесси çинчен сӳтсе-явнă, коммунистсене бригадăсемпе звенасем тăрăх вырнаçтарса тухнă, агитколлективсен ĕç планĕсене пăхса туса çирĕплетнĕ, колхозсенчи тата бригадăсенчи стена хаçачĕсен редакторĕсене çирĕплетнĕ, вĕсемпе канашлусем туса ирттернĕ.

Уборкăри агитацилле ĕçе партин Калинински райкомĕ (секретарĕ Кудряшов юлташ), Хĕрлĕ Чутай райкомĕ (секретарĕ Кузьмин юлташ) тата ыттисем те лайăх организациленĕ.

Совет халăхĕн отечественнăй вăрçи çинчен агитаторсем колхозниксене большевикла чăн сăмахпа калаcа параççĕ. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче савтери тискер ĕçсем тунни çинчен агитаторсем каласа кăтартаççĕ. Вĕсем партипе правительство ялхуçалăхĕ тĕлĕшпе йышăннă постановленисене ăнлантарса параççĕ. Çак ĕçсене туса пынă çĕрте вĕсем хаçатсемпе тата журналсемпе усă кураççĕ, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерӳвĕсене, боевой эпизодсене вуласа параççĕ. Агитаторсем тырă вырнă, авăн çапнă çĕрте хастарлă ĕçлесе ытти колхозниксене пример кăтартаççĕ. Агитаторсем çав вăхăтрах бригадăри ĕçе, звенопа звено, бригадăпа бригада пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлессине организацилеççĕ.

Комсомольски районри «Янга Турмыш» колхозăн 7-мĕш бригадинче агитатор комсомолка А. Павлова ĕçлет. Вăл тырă вырнă çĕрте хăй пример кăтартса, агитацилле ĕçе туса пырса, колхозниксемпе колхозницăсене тăрăшса ĕçлеме хавхалантарса пынă, вара бригада членĕсем пурте нормăна 120 процент таран тултарса ĕçлекен пулнă. Бригада кĕртырпиисене 7 кун хушшинче вырса пĕтернĕ. Çав районри «Победа» колхозри агитаторсем — учительницăсем Львовăпа Ежова тырă вырнă çĕрте нормăна 200 процент ытла тултарса ĕçленĕ. Ку районри «Красный Октябрь» колхозăн иккĕмĕш бригадин бригадирĕ, ВКП(б) членĕ Григорьев отечественнăй вăрçă участникĕ, пĕр вăхăтрах агитатор пулса ĕçлесе, бригадăри ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Ку бригада хăйĕн заданине 150 процента çити пурнăçланă.

Чкаловски районри Чкалов ячĕпе тăракан колхозăн пĕрремĕш бригадинче ĕçлекен коммунист Е. Румянцева юлташ тырă вырнă. Вăл кашни кунах нормăна 160—180 процент таран пурнăçланă. Ăна кура ытти колхозниксемпе колхозницăсем те тăрăшса ĕçленĕ. Вара пĕтĕм бригада нормăна 120—150 процента çити тултарса пынă. Тăвай районĕнчи «8-ое марта» колхозра коммунист С. Фомина юлташ нормăна 200 процент ытла тултарса ĕçленĕ.

Производствăра тăрăшса ĕçлекен тата агитацилле ĕçе юратса туса пыракан агитаторсем сахал мар. Вĕсем уборкăна ăнăçлăн ирттерме нумай пулăшаççĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз кĕр тыррисене ултă кун хушшинче, районра пуринчен малтан, вырса пĕтернĕ. Колхозницăсем Н. Николаевăпа М. Ермакова кашни кунах икĕ-виçĕ норма тухлĕ ĕçленĕ. Колхозра 7 агитатор. Вĕсем кашни кунах калаçусем ирттернĕ, хаçатсем вуласа панă, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларнă, социализмлă ăмăрту мĕнле пыни çинчен кăтарту хăми çине çырса пынă. Агитатор-учитель Сидоров юлташ колхозниксем хушшинче 18 калаçу ирттернĕ, отечественнăй вăрçă çинчен темиçе хутчен доклад туса панă. Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз кĕртыррисене тăватă кун çурăра вырса пĕтернĕ. Кунта ĕçлеме пултаракансем пурте ĕçе тухаççĕ. Колхозра 34 агитатор. Вĕсенчен 25-шĕ тырă вырнă çĕре хутшăннă, социализмлă ăмăртăва организацилесе пыраççĕ, хаçатсем вуласа кăтартаççĕ, боевой листоксемпе стена хаçачĕсем кăлараççĕ.

Калинински районри «1-ое мая» колхозри агитаторсем (агитколлектив руководителĕ Андреев юлташ) уборка вăхăтĕнче ĕç дисциплинине çирĕплетме, колхозниксене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухма пулăшнă. Тырă вырма тытăнсанах колхозра кая юлса ĕçе тухакансем чылай пулнă (пулсан, агитаторсем тырă пухас ĕçе лайăх туса пыма кирли çинчен ăнлантарса панă хыççăн колхозниксем кунĕн-çĕрĕн ĕçлекен пулнă, тăккаланчăксене хирĕç кĕрешнĕ. Колхоз кĕртыррисене 10 кунта вырса пĕтермелле пулнă, 7 кун хушшинче вырса пĕтернĕ, пучахсене пăлтах пухса кĕртнĕ.

Уйрăм районсемпе колхозсенче социализмлă ăмăрту мĕнле пыни çинчен стена хаçачĕсем, боевой листоксем, кăтарту хăмисем çине çыраççĕ, ăмăртура мала тухнисене пама колхозăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тунă. Республикăн 8 районĕнче кăна 15 кун хушшинче колхозсен тата бригадăсен стена хаçачĕсене 2.650 номер кăларнă. Шăхасан районĕнче 30 колхозра — кăтарту хăмисем, 25 колхозра — куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавсем, Елчĕк районĕнче 34 колхозра — кăтарту хăмисем, 13 колхозра — куçса çӳрекен ялавсем, 31 колхозра — 107 ситрина пур.

Уйрăм районсенче тырă вырнă вăхăтра колхозсем тăрăх агитбригадăсем çӳренĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнче комсомолецсен агитбригадинче 15 çын пулнă. Ку бригада 32 колхозра пулнă. Унти агитаторсем калаçусем ирттернĕ, стена хаçачĕсем, боевой листоксем кăларнă, ĕçрен пушă вăхăта савăнăçлăн ирттерессине организациленĕ.

Çавăнта пĕрлех агитацилле ĕçре ситменлĕхсем те пур-ха. Агитаторсен колхозниксемпе пĕрле производствăра ĕçлемелли çинчен çирĕп кăтарту пур пулсан та, пирĕн ялсенчи агитаторсен пĕр пайĕ колхоз ĕçне хутшăнман-ха. Елчĕк районĕнчи 388 агитатортан 245 çын кăна уборкăра ĕçленĕ. ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра агитаторсем пулса ĕçлеме Михельсонпа Шалкин юлташсене янă. Вĕсем вара массăсем хушшинче политикăллă ĕçе туса пымаççĕ. Партин Хĕрлĕ Чутай райкомĕ колхозсене янă агитаторсем Матвеева, Микушкин тата Павлов юлташсем вунпилĕк кун хушши çав колхозсенче пулман. Çакăн пек фактсем ытти районсенче те пур. Партин хăшпĕр райкомĕсем колхозсенче агитацилле ĕçе начар туса пынипе килĕшеççĕ, çавна пула колхозсем уборкăра кая юлса пыраççĕ. Ишлей районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозра агитаторсене уйăрман, колхозниксене хаçат вуласа паракан та пулман. Ку вара колхозра дисциплина япăхланасси патне илсе пынă. Ыран вырас ĕç колхозра 15 куна ытла чăсăлнă.

Парти организацийĕсен руководителĕсен, агитаторсен пурин те массăсем хушшинчи политикăллă ĕçе вăйлатма тăрăшас пулать. Халĕ, уборка хĕрсе пынă чухне, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитацилле ĕçе кашни кунах тата тимлĕн туса пымалла.

Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем, коммунистсемпе комсомолецсем уборкăра пĕтĕм вăйя хурса ĕçлесе çĕршыва, фронт валли ытларах та ытларах апат-çимĕç хатĕрлесе пама тивĕçлĕ.

С. СДОБНОВ,
ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отдел заведующийĕн заместителĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 8, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1384

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.